## «ТĂВАН ЧĔЛХЕ»
## вĕренӳ предмечĕпе çырнă ĕç программисен аннотацийĕсем

## V класс

Ĕç программине çырнă чухне **стандарта** (Федеральный государственный образовательный стандарт основного общего образования);

**Программăна (**Чăваш чĕлхи тĕслĕх программа: чăваш шкулĕн 5-9 класĕсем. И.А.Андреев, Г.Н.Семенова, Ю.М.Виноградов хатĕрленĕ – Шупашкар: Чăваш Республикин вĕренӳ институчĕн издательство центрĕ, 2013 – 63 с.);

**Учебника** (Чăваш чĕлхи: 5 класс валли. Л.П. Сергеев, Е.А. Андреева, Г.Ф.Брусова – Шупашкар: Чăваш кĕнеке издательстви, 2014) **тĕпе хурса тунă**.

Программăн тĕллевĕсем:

1) вĕренекенсене тăван чĕлхепе туллин тата çыхăнуллăн калаçма-çырма, грамматикăн тата лексикăн, фонетикăн мĕн пур пайĕсене ăнланса пыма, пĕлнипе усă курса сăмахсене, сăмах майлашăвĕсене, предложенисене тĕрĕс калама тата çырма, пуплеве тĕрĕс йĕркелеме тата стиль уйрăмлăхĕсене асăрхама вĕрентесси.
2) тăван чĕлхе урлă вĕренекенсен ăс–хакăлне, ăс-тăнне аталантарасси, тавракурăмне ӳстересси; тăван чĕлхе çыннăн ăс-тăнĕпе шухăшлавне йĕркеленине палăртасси, çавна май тăван чĕлхепе калаçу урлă кăна мар, çыру урлă та çăмăллăнах хутшăнма пултарассине аталантарасси.
3) тăван чĕлхе урлă вĕренекенсен кăмăл-туйăмне йĕркелесси; çынлăх шайне çĕкленме пулăшасси, идейăпа мораль тĕлĕшĕнчен чăн-чăн граждансем пулма хăнăхтарасси; чăвашлăх туйăмне аталантарасси: тăван халăхне, чĕлхине, тăван вырăнне юратма тата ытти халăх культурине хисеплеме вĕрентсе пырасси.

Тĕллев стандартăн содержанине пăхăнса, разделсенчи темăсене йĕркипе вĕренсе пынипе пурнăçланса пырать. Тăван чĕлхепе 5 класра çакăн пек кирлĕ пайсем пур, вĕсем «Синтаксис. Пунктуаци», «Лексика», «Сăмах тытăмĕпе сăмах пулăвĕ. Орфографи». «Фонетика. Орфоэпи. Графика. Орфографи» пайра усă сасăсемпе хупă сасăсем, вырăс чĕлхинчен çырупа йышăннă сăмахсем, ударени, стильсем çинчен вĕренме палăртнă. Çавăн пекех, сăмаха фонетика, тытăмĕ, пулăвĕ, лексика енчен тишкерме, орфографипе пунктуаци енчен тĕрĕс çырма вĕренесси, сăмах пуянлăхне ӳстерсе пырасси çине ытларах тимленĕ.

Программăна вĕренекенсен çыхăнуллă пуплевне аталантарас тесе сочиненипе изложени, калав çырмалли тата калаçмалли сехетсем кĕртнĕ.

Пайри темăсене вĕренсе пĕтерсен хушма ĕçлĕ тĕрĕслев диктанчĕсем, зачетсем е урăхла тĕрĕслев ĕçĕсем палăртнă. Программăра вĕренӳ çулĕ пуçламăшĕнче тата вĕренӳ çулĕ вĕçĕнче вĕреннине аса илмелли сехетсем кăтартнă.

Ĕç программинче вĕренӳ предмечĕ валли эрнере 3 сехет уйăрнă, вĕренӳ çулĕ тăршшĕпе 105 сехет пулать. 5 класра тăван чĕлхене „Чăваш чĕлхи 5 класс” авторĕсем: Л.П. Сергеев, Е.А. Андреева, Г.Ф. Брусова (Шупашкар : Чăваш кĕнеке издательстви, 2014.) кĕнекепе вĕренме палăртнă. Вĕренӳ кĕнекине Чăваш Республикин Вĕренӳ тата çамрăксен политикин министерстви шкулсенче усă курма сĕннĕ.

Ĕç программи «Ăнлантару çырâвĕ»„ „Чăваш чĕлхине вĕреннин результачĕсем», «Вĕренӳ предмечĕн содержанийĕ», «Тематика планĕ» пайсенчен тăрать.

# VI класс

Ĕç программине çырнă чухне **стандарта** (Федеральный государственный образовательный стандарт основного общего образования);

**Программăна** (Чăваш чĕлхи. Тĕслĕх программа: чăваш шкулĕн 5-9 класĕсем валли/ И. А. Андреев, Г.Н.Семенова, Ю.М.Виноградов хатĕрленĕ. – Шупашкар: Чăваш Республикин вĕренӳ институчĕн издательство центрĕ, 2013);

**Вĕренӳ пособине (**Чăваш чĕлхи: 6 класс валли. / Л.Г.Петрова, Ю.М.Виноградов. - Шупашкар: Чăваш кĕнеке издательстви, 2014) тĕпе хурса хатĕрленĕ.

Программăн тĕллевĕсем:

1. Чăваш чĕлхи патшалăх чĕлхи пулнине тĕпе хурса ăна хисеплеме, юратма, культура пулăмĕ иккенне, илемлĕх пуянлăхĕ пулнине ăнланма вĕрентесси; тăван чĕлхемĕрĕн обществăри вырăнне(çынсем хутшăннă чухнехи кирлĕлĕхне), чĕлхере чăвашăн кăмăл-сипет, моральпе этика нормисем, шухăшлав манерĕ, тавра курăмĕ палăрнине кăтартасси;
2. Чăваш чĕлхине кулленхи пурнăçра, вĕренӳре усă курмалăх алла илме, кирек мĕнле самантра та тăван чĕлхепе усă курса хутшăнма хатĕр пулма , пуплеве куллен-кун якатма хавха пухма хатĕрлесси: кулленхи вĕренӳре кирлĕ хăнăхусене , пур енлĕ вĕренӳ ĕç-хĕл мелĕсене( ĕç тĕллевĕсене сăмахпа каласси, пуплев енчен тĕрĕслесси,тӳрлетесси; библиографии шыравĕ тăвасси, чĕлхе словарĕсенче, Интернетра тата ытти информаци хатĕрĕсенче кирлĕ материал тупасси, ăна тишкересси,илнĕ информацие кирлĕ пек улăштарасси,çĕнетесси т.ыт.те) алла илме пулăшасси;
3. Чăвашла пуплевĕн тĕрлĕ тĕсĕпе усă курма, чĕлхе нормисене хутшăнăвăн тĕрлĕ лару-тăрăвĕнче тытса пыма, пуплев этикетне пăхăнма хăнăхтарасси; чĕлхе тытăмĕ çинчен, вăл пуплевре мĕнле палăрни çинчен пĕлӳ парасси; чĕлхе факчĕсене уйăрса илме, тишкерме, танлаштарма, ушкăнлама тата хак пама пултараслăха аталантарасси; пуплевре ялан усă куракан е усă курма кирлĕ сăмах йышне ӳстересси; пуплеве чĕлхен грамматика хатĕрĕсемпе пуянлатма хăнăхтарасси; орфографипе пунктуации енчен тĕрĕс çырма вĕрентесси; пуплеве куллен-кун лайăхлатас, пуянлатас тĕллеве çирĕплетесси

Тĕллев стандартăн содержанине пăхăнса, разделсенчи темăсене йĕркипе вĕрентсе пынипе пурнăçланса пырать. Тăван чĕлхепе 6 класра çакăн пек кирлĕ пайсем пур, вĕсем „Япала ячĕсем”, „Паллă ячĕсем”, „Хисеп ячĕсем”, „Местоименисем”, „Наречисем”, „Евĕрлев сăмахĕсем”. „Глаголсем” пайра глаголсен сăпатлă формисем, наклоненисем çинчен вĕренме палăртнă. Çавăн пекех, вĕсен грамматика формисене çырура та, калаçура та тĕрĕс палăртассине ытларах тимленĕ.

Программăна вĕренекенсен çыхăнуллă пуплевне аталантарас тесе сочиненипе изложени, калав çырмалли тата калаçмалли сехетсем кĕртнĕ.

Пайри темăсене вĕренсе пĕтерсен хушма ĕçлĕ тĕрĕслев диктанчĕсем, зачетсем е урăхла тĕрĕслев ĕçĕсем палăртнă. Программăра вĕренӳ çулĕ пуçламăшĕнче тата вĕренӳ çулĕ вĕçĕнче вĕреннине аса илмелли сехетсем кăтартнă.

Ĕç программинче вĕренӳ предмечĕ валли эрнере 2 сехет уйăрнă, вĕренӳ çулĕ тăршшĕпе 70 сехет пулать. 6 класра тăван чĕлхене „Чăваш чĕлхи 6 класс” авторĕсем: Ю.М.Виноградов, Л.Г. Петрова, (Шупашкар: Чăваш кĕнеке издательстви, 2014.) кĕнекепе вĕренме палăртнă. Вĕренӳ кĕнекине Чăваш Республикин Вĕренӳ тата çамрăксен политикин министерстви шкулсенче усă курма сĕннĕ.

Ĕç программи «Ăнлантару çырâвĕ», «Чăваш чĕлхине вĕреннин результачĕсем», «Вĕренӳ предмечĕн содержанийĕ», «Тематика планĕ» пайсенчен тăрать.

# VII класс

Ĕç программине çырнă чухне **стандарта** (Федеральный государственный образовательный стандарт основного общего образования)

**Программăна** (Чăваш чĕлхи. Тĕслĕх программа: чăваш шкулĕн 5-9 класĕсем валли/ И. А. Андреев, Г.Н.Семенова, Ю.М.Виноградов хатĕрленĕ. – Шупашкар: Чăваш Республикин вĕренӳ институчĕн издательство центрĕ, 2013) ,

**Вĕренӳ пособине (**Чăваш чĕлхи: 7-мĕш класс валли / Ю.М.Виноградов, Л.Г.Петрова. – Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 2016. – 223 с.), тĕпе хунă.

Программăн тĕллевĕсем:

1.Чăваш чĕлхи патшалăх чĕлхи пулнине тĕпе хурса ăна хисеплеме, юратма, культура пулăмĕ иккенне, илемлĕх пуянлăхĕ пулнине ăнланма вĕрентесси; тăван чĕлхемĕрĕн обществăри вырăнне(çынсем хутшăннă чухнехи кирлĕлĕхне), чĕлхере чăвашăн кăмăл-сипет, моральпе этика нормисем, шухăшлав манерĕ, тавра курăмĕ палăрнине кăтартасси;

2. Чăваш чĕлхине кулленхи пурнăçра, вĕренӳре усă курмалăх алла илме, кирек мĕнле самантра та тăван чĕлхепе усă курса хутшăнма хатĕр пулма, пуплеве куллен-кун якатма хавха пухма хатĕрлесси: кулленхи вĕренӳре кирлĕ хăнăхусене, пур енлĕ вĕренӳ ĕç-хĕл мелĕсене алла илме пулăшасси;

3. Чăвашла пуплевĕн тĕрлĕ тĕсĕпе усă курма, чĕлхе нормисене хутшăнăвăн тĕрлĕ лару-тăрăвĕнче тытса пыма, пуплев этикетне пăхăнма хăнăхтарасси; чĕлхе тытăмĕ çинчен, вăл пуплевре мĕнле палăрни çинчен пĕлӳ парасси; чĕлхе факчĕсене уйăрса илме, тишкерме, танлаштарма, ушкăнлама тата хак пама пултараслăха аталантарасси; пуплевре ялан усă куракан е усă курма кирлĕ сăмах йышне ӳстересси; пуплеве чĕлхен грамматика хатĕрĕсемпе пуянлатма хăнăхтарасси; орфографипе пунктуации енчен тĕрĕс çырма вĕрентесси; пуплеве куллен-кун лайăхлатас, пуянлатас тĕллеве çирĕплетесси **.**

Тĕллев стандартăн содержанине пăхăнса, разделсенчи темăсене йĕркипе вĕрентсе пынипе пурнăçланса пырать. 7 класра тăван чĕлхепе çакăн пек кирлĕ пайсем пур, вĕсем „Глаголсен сăпатсăр формисем”, „Пулăшу пĕлтерĕшлĕ пуплев пайĕсем”. „Синтаксиспа пунктуаци” пайра сăмах майлашăвĕпе предложени, хутсăр предложенин хутшăнуран килекен тытăмĕ, ыйтуллă тата ыйтусăр предложенисем, пурлă тата çуклă предложенисем çинчен вĕренме палăртнă. Çавăн пекех, сăмахсен вĕсен грамматика формисене çырура та, калаçура та тĕрĕс палăртассине ытларах тимленĕ.

Программăна вĕренекенсен çыхăнуллă пуплевне аталантарас тесе сочиненипе изложени, калав çырмалли тата калаçмалли сехетсем кĕртнĕ.

Пайри темăсене вĕренсе пĕтерсен хушма ĕçлĕ тĕрĕслев диктанчĕсем, зачетсем е урăхла тĕрĕслев ĕçĕсем палăртнă. Программăра вĕренӳ çулĕ пуçламăшĕнче тата вĕренӳ çулĕ вĕçĕнче вĕреннине аса илмелли сехетсем кăтартнă.

Ĕç программинче вĕренӳ предмечĕ валли эрнере 2 сехет уйăрнă, вĕренӳ çулĕ тăршшĕпе 70 сехет пулать. 7 класра тăван чĕлхене „Чăваш чĕлхи 7 класс” авторĕсем: Ю.М.Виноградов, Л.Г. Петрова (Шупашкар : Чăваш кĕнеке издательстви, 2016.) кĕнекепе вĕренме палăртнă. Вĕренӳ кĕнекине Чăваш Республикин Вĕренӳ тата çамрăксен политикин министерстви шкулсенче усă курма сĕннĕ.

Ĕç программи «Ăнлантару ḉырâвĕ», «Чăваш чĕлхине вĕреннин результачĕсем», «Вĕренӳ предмечĕн содержанийĕ», «Тематика планĕ» пайсенчен тăрать.

# VIII класс

Ĕç программине çырнă чухне **стандарта** (Федеральный компонент государственного стандарта основного общего образования);

**Программăна**(Чăваш чĕлхи программи: чăваш шкулĕн 5-9 класĕсем / И.Андреев хатĕрленĕ _ Шупашкар: 2007.);

**Учебника(**Чăваш чĕлхи: 8-9 классем валли. Хушса çĕнетнĕ 2-мĕш кăларăм/ И.А. Андреев.- Шупашкар, чăваш кĕнеке издательстви, 2009.) тĕпе хунă.

Программăн тĕллевĕсем:

1.Вĕренекенсене тăван чĕлхепе туллин тата çыхăнуллăн калаçма-çырма, грамматикăн тата лексикăн, фонетикăн мĕн пур пайĕсене ăнланса пыма, пĕлнипе усă курса сăмахсене, сăмах майлашăвĕсене, предложенисене тĕрĕс калама тата çырма, пуплеве тĕрĕс йĕркелеме тата стиль уйрăмлăхĕсене асăрхама вĕрентесси.

2.Тăван чĕлхе урлă вĕренекенсен ăс–хакăлне, ăс-тăнне аталантарасси, тавракурăмне ÿстересси; тăван чĕлхе çыннăн ăс-тăнĕпе шухăшлавне йĕркеленине палăртасси, çавна май тăван чĕлхепе калаçу урлă кăна мар, çыру урлă та çăмăллăнах хутшăнма пултарассине аталантарасси.

3.Тăван чĕлхе урлă вĕренекенсен кăмăл-туйăмне йĕркелесси; çынлăх шайне çĕкленме пулăшасси, идейăпа мораль тĕлĕшĕнчен чăн-чăн граждансем пулма хăнăхтарасси; чăвашлăх туйăмне аталантарасси: тăван халăхне, чĕлхине, тăван вырăнне юратма тата ытти халăх культурине хисеплеме вĕрентсе пырасси.

Тĕллев стандартăн содержанине пăхăнса, разделсенчи темăсене йĕркипе вĕрентсе пынипе пурнăçланса пырать. 8 класра чăваш чĕлхипе çакăн пек кирлĕ пайсем пур, вĕсем „Синтаксиспа пунктуаци”, „Хутсăр предложенин грамматика тытăмĕ”, „Чĕнÿ”, „Тулли мар предложенисем”, „Предложенири уйрăмлатакан сăмахсем”, „Тÿрĕ тата тÿрĕ мар пуплевлĕ предложенисем”, „Хутсăр предложени” пайра тема тата рема, предложенири сăмахсен йĕрки, шухăш тĕшши, ыйтусăр тата ыйтуллă, пурлă тата çуклă предложенисем çинчен вĕренме палăртнă. Çавăн пекех, пуплеве перекетлĕ тăвасси, калаçăва темăран пăрăнмасăр тытса пырасси, текста абзацсем çине пайласси, предложени членĕсене тата вĕсен паллисене палăртасси, предложенире чарăну паллисене тĕрĕс лартасси çине ытларах тимленĕ.

Программăна вĕренекенсен çыхăнуллă пуплевне аталантарас тесе сочиненипе изложени, калав çырмалли тата калаçмалли сехетсем кĕртнĕ.

Пайри темăсене вĕренсе пĕтерсен хушма ĕçлĕ тĕрĕслев диктанчĕсем, зачетсем е урăхла тĕрĕслев ĕçĕсем палăртнă. Программăра вĕренÿ çулĕ пуçламăшĕнче тата вĕренÿ çулĕ вĕçĕнче вĕреннине аса илмелли сехетсем кăтартнă.

Ĕç программинче вĕренÿ предмечĕ валли эрнере 2 сехет уйăрнă, вĕренÿ çулĕ тăршшĕпе 70 сехет пулать. 8 класра тăван чĕлхене „Чăваш чĕлхи: 8 - 9 класс” авторĕ: И.А.Андреев (Шупашкар: Чăваш кĕнеке издательстви, 2012.) кĕнекепе вĕренме палăртнă. Вĕренÿ кĕнекине Чăваш Республикин Вĕренÿ тата çамрăксен политикин министерстви шкулсенче усă курма сĕннĕ.

Ĕç программи «Ăнлантару çырâвĕ», «Чăваш чĕлхине вĕреннин результачĕсем», «Вĕренÿ предмечĕн содержанийĕ», «Тематика планĕ» пайсенчен тăрать.

# IX класс

Ĕç программине çырнӑ чухне стандарта (Федеральный компонент государственного стандарта основного общего образования);

**Программӑна**(Чӑваш чӗлхи программи: чӑваш шкулӗн 5-9 класӗсем / И.Андреев хатӗрленӗ _ Шупашкар: 2007.);

**Учебника** (Чӑваш чӗлхи: 8-9 класс валли. / . _ И.Андреев. - Шупашкар: Чӑваш кӗнеке издательстви: 2008.) тӗпе хунӑ.

Программӑн тӗллевӗсем:

1.Вӗренекенсене тӑван чӗлхепе туллин тата çыхӑнуллӑн калаçма-çырма, грамматикӑн тата лексикӑн, фонетикӑн мӗн пур пайӗсене ӑнланса пыма, пӗлнипе усӑ курса сӑмахсене, сӑмах майлашӑвӗсене, предложенисене тӗрӗс калама тата çырма, пуплеве тӗрӗс йӗркелеме тата стиль уйрӑмлӑхӗсене асӑрхама вӗрентесси.

2.Тӑван чӗлхе урлӑ вӗренекенсен ӑс–хакӑлне, ӑс-тӑнне аталантарасси, тавракурӑмне ӳстерессси; тӑван чӗлхе çыннӑн ӑс-тӑнӗпе шухӑшлавне йӗркеленине палӑртасси, çавна май тӑван чӗлхепе калаçу урлӑ кӑна мар, çыру урлӑ та çӑмӑллӑнах хутшӑнма пултарассине аталантарасси.

3.Тӑван чӗлхе урлӑ вӗренекенсен кӑмӑл-туйӑмне йӗркелесси; çынлӑх шайне çӗкленме пулӑшасси, идейӑпа мораль тӗлӗшӗнчен чӑн-чӑн гражданcем пулма хӑнӑхтарасси; чӑвашлӑх туйӑмне аталантарасси: тӑван халӑхне, чӗлхине, тӑван ырӑнне юратма тата ытти халӑх культурине хисеплеме вӗрентсе пырасси.

Тӗллев стандартӑн содержанине пӑхӑнса, разделсенчи темӑсене йӗркипе вӗрентсе пынипе пурнӑçланса пырать. 9 - мӗш класра чӑваш чӗлхипе çакӑн пек кирлӗ пай пур, вӑл - „Хутлӑ предложени".Çак пайра „Союзсӑр хутлӑ предложени", „Сыпӑнуллӑ хутлӑ предложени", „Пӑхӑнуллӑ хутлӑ предложени" çинчен тарӑннӑн вӗренме палӑртнӑ.Çавӑн пекех, тӗрлӗ ӗлкепе предложенисем йӗркелеме, чарӑну паллисене тӗрӗс лартма, чӑвашла тӗрӗс калаçса-çырса хутшӑнма пӗлме кирлине ытларах шута илнӗ.

Программӑна вӗренекенсен çыхӑнуллӑ пуплевне аталантарас тесе сочиненипе изложени, калав çырмалли тата калаçмалли сехетсем кӗртнӗ.

Пайри темӑсене вӗренсе пӗтерсен хушма ĕçлӗ тӗрӗслев диктанчӗсем, зачетсем е урӑхла тӗрӗслев ĕçӗсем палӑртнӑ. Программӑра вӗренӳ çулӗ пуçламӑшӗнче тата вӗренӳ çулӗ вӗçӗнче вӗреннине аса илмелли сехетсем кӑтартнӑ.

Ĕç программинче вӗренӳ предмечӗ валли эрнере 1,5 сехет уйӑрнӑ, вӗренӳ çулӗ тӑршшӗпе 51 сехет пулать. 9 класра тӑван чӗлхене „Чӑваш чӗлхи: 8 - 9 класс" авторӗ: И.А.Андреев (Шупашкар : Чӑваш кӗнеке издательстви, 2012.) кӗнекепе вӗренме палӑртнӑ. Вӗренӳ кӗнекине Чӑваш Республикин Вӗренӳ тата çамрӑксен политикин министерстви шкулсенче усӑ курма сӗннӗ.

Ĕç программи «Ӑнлантару ḉырâвӗ», «Чӑваш чӗлхине вӗреннин результачӗсем», «Вӗренӳ предмечӗн содержанийӗ», «Тематика планӗ» пайсенчен тӑрать.